27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
15
ВЫРСАРНИКУН
204(6699) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен обязательствисем

Государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртмелле тата октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 500 пин пăт тырă памалла

Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 27 çул тултарнине совет халăхĕ хамăрăн Хĕрлĕ Çар историллĕ паллă çĕнтерÿсем тунă лару-тăрура кĕтсе илет. Нимĕç тискер кайăкне часах унăн хăйĕн шăтăкĕнчех татăклăн пĕтерсе тăкассине эпир пурте шанса тăратпăр. Татăклă çĕнтерÿ тăвас тесен, хамăр халăхăн пĕтĕм вăйне мобилизацилени, хамăрăн наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăни кирлĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне татах ытларах тĕреклетрĕ. Советлă Чăваш республикинчи колхозлă хресченсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи кашни çулах государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли хăйсен обязательствисене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пычĕç. Эпир кăçал та начар мар тырпул ÿстерсе пухса илтĕмĕр. Республикăри 1.400 колхоз ытла государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç ĕнтĕ. Шупашкар районĕнчи колхозниксем пуçарнипе республикăри нумай колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнчĕç.

Украина колхозникĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каланине эпир хĕрÿллĕн ырлатпăр.

Вĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултармалла, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата пĕтĕмпех парса татмалла.
2. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 500.000 пăт тырă памалла.

Çак обязательствăсене йышăнса, эпир вĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн колхозсемпе районсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса яратпăр, авăн çапассине вăйлататпăр, малта пыракансем кайринисене пулăшассине организацилетпĕр. Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен тултарса тата планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса, хамăр Тăван çĕршывăн вăрçăри вăй-хăватне татах та ытларах тĕреклетер.

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç — Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ!

(Обязательствăсене республикăри колхозсенче пĕрлешÿллĕ пухусенче сÿтсе-явса йышăннă).

Промышленноçпа транспорт работникĕсен тăваттăмĕш кварталти задачисем

Совет тылĕ 1944 çулăн юлашки тăваттăмĕш кварталне Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пынă тапхăрта кĕчĕ. Халĕ промышленноçпа транспорт работникĕсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, Тăван çĕршыва аслă уяв ячĕпе чаплă парнесем пама хатĕрленеççĕ.

Нумай предприятисен коллективĕсем хăйсем уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çĕмĕрлери комбинат коллективĕ 9 уйăхри плана срокчен пурнăçа кĕртнĕ. Володин, Якунин, Челноков юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсем сентябрьти плана ирттерсе тултарнă. Сахал мар промкомбинатсемпе апат-çимĕç комбиначĕсем тата промысла коопераци артелĕсем çулталăкри плана тултарса çитереççĕ. Çулталăкри плана срокчен пурнăçа кĕртнĕ предприятисен ретне Кувакинăри, Пăрачкаври, Вăрмарти, Янташри, Канашри промкомбинатсен, Сĕнтĕрвăрринчи çу завочĕн тата ытти чылай фабрик-заводсемпе артельсен коллективĕсем тăчĕç.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă пиншер рабочисен, вуншар предприяти коллективĕсен кулленхи ĕçĕсем пирĕн халăх мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр пулнине тата вăл çĕнтерÿ сехетне çывхартас туйăмпа ĕçлесе пурăннине кăтартса параççĕ.

Анчах эпир тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн республикăри промышленность иртнĕ тăхăр уйăх хушшинче çулталăкри плана 66,8 процент кăна тултарнă. Промышленноçпа транспортăн тăваттăмĕш кварталта иртнĕ вăхăтринчен пысăкрах задачăсене пурнăçа кĕртмелле. Тăваттăмĕш кварталти ĕçсем çулталăкри плана тултарассине татса параççĕ. Çав вăхăтрах тăваттăмĕш кварталта, кĕркуннепе хĕллехи çанталăк условийĕсене пула, чылай çĕнĕ йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Çав йывăрлăхсене çĕнтерсе хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлемелле тăвас тесен, ытларах вăй хурса ĕçлени, мĕнпур майсемпе туллин усă курни кирлĕ.

Халĕ партипе совет организацийĕсен, хуçалăх руководителĕсен юлса пыракан предприятисене малти вырăна кăларасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Пирĕн республикăра ун пек предприятисем сахал мар-ха. Плана ăнăçлăн тултаракансен ретĕнче Канашри вагонсем юсакан завод çук, промысла коопераци артелĕсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем сахал. Уйрăм предприятисем хăйсен планне вăхăтра тултарманни пĕтĕм промышленноçпа транспорт ĕçне чăрмав кÿрет. Акă, вăрман хатĕрлекен организацисене илер. Вĕсем начар ĕçлени чугун çулсене йывăрлăхсем кÿрет. Чугун çулсем йĕркеллĕ ĕçлейменни вара предприятисем валли чĕртаварсемпе топливо турттарассине йывăрлатать. Çавăнпа та кая юлса пыракан предприятисен ĕçĕсемпе ытларах интересленмелле, вĕсене пур майсемпе те малти вырăна тухма пулăшмалла.

Предприятисен ĕçне лайăхлатас тесен, уяв умĕнхи обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе пыни тата çав обязательствăсене пурнăçлама условисем туса пани кирлĕ. Обязательствăсене пурнăçа кĕртнине пĕтĕмĕшпе кăна мар, уйрăм цехсем, бригадăсем тăрăх тĕрĕслемелле, ăмăрту итогĕсене вăхăтра туса, вĕсем çинчен мĕнпур рабочисене пĕлтерсе тăмалла. Çакăн пек туни малта пыракансене хаваслантарать, кая юлакансене хăйсен ĕçне лайăхлатма пулăшать. Ăмăртса ĕçлекенсене обязательствăсене хаклама вĕрентес пулать. Обязательство илтĕн пулсан, ăна вăхăтра пурнăçа кĕртмелле.

Предприяти руководителĕсен тата партипе профсоюз организацийĕсен хальхи тапхăрта хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле. Кашни сехетпе, кашни кунпа усă курас пулать. Вăхăта вăраха ямасăр мĕнпур производство çурчĕсемпе пурăнмалли çуртсене юсаса ăшăтмалла, топливăпа чĕртаварсем кирлĕ таран хатĕрлесе хумалла. Культурăллă учрежденисене, столовăйсемпе больницăсене хĕле хатĕрлес ĕçе те кая хăварма юрамасть. Хĕллехи вăхăтра тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисене пурне те хатĕрлесен кăна йывăрлăхсене ăнăçлăн тÿссе ирттерме пулать.

Производство планне тултарас ĕçе кадрсем татса параççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ партипе комсомол, профсоюз, хуçалăх руководителĕсен кадрсен техникăпа политика пĕлĕвне ÿстерес, вĕсен квалификацине çĕклес енĕпе куллен çине тăрса ĕçлемелле. Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилесе, рабочисене ĕç çине социализмла пăхма, дисциплинăна пăхăнма, çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса ĕçлеме вĕрентмелле. Миллионшар рабочисем фронтпа çĕршыва пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах ĕçрен пăрăнма пикенекенсем те пур-ха. Вĕсене тăрăшса ĕçлеме хăнăхтарас пулать.

Социализмлă ăмăрту ĕçĕн çĕнĕ меточĕсене çуратать. Предприятисен руководителĕсемпе инженерла-техникла работниксен тата партипе профсоюз организацийĕсен тивĕçĕ — çав çĕнĕ методсене анлăн сарса пырса, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырасси пулать. Паллах, производствăна лайăх йĕркелемесĕр, ĕç вырăнне тĕрĕс организацилемесĕр, вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмасăр çĕнĕ методсем те усă нумай памаççĕ. Çавăнпа та кашни предприятирех производство технологине тĕрĕс йĕркелемелле.

Фронтпа çĕршыв интересĕсем промышленноçпа транспорт ĕçне малалла лайăхлатса пыма хушаççĕ. Предприятисемпе промысла коопераци артелĕсенчи тата транспортри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, служащисем çавна яланах асра тытса, вăйсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва большевикла организацилесе пырсан, эпир тăваттăмĕш кварталти производство планне вăхăтра тултарма, çапла вара, фронтпа çĕршыв валли вăрçă техникипе апат-çимĕç кирлĕ чухлех парса тăма пултаратпăр.

Ăмăртура мала тухнă рабочисене премин панă

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра цехсен тата пĕр пек профессисемпе ĕçлекенсен социализмлă ăмăртăвĕн сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Цехсен ăмăртăвĕнче строительство цехĕпе Давыдова юлташ начальник пулса ĕçлекен цех мала тухнă. Пĕр пек профессисемпе ĕçлекенсен ăмăртăвĕнче мала тухса, чи лайăх токарь ятне Журавлев юлташ, чи лайăх слесарь ятне Лупанов юлташ, чи лайăх закладчица ятне Лопакова юлташ тата чи лайăх шофер ятне Мораев юлташ илнĕ. Вĕсене пурне те премисем панă.

Тăван çĕршыва ытларах тырă парса, тăшмана пуçĕпех çĕнтерес куна çывхартар!

ХĔРЛĔ ÇАР ФОНДНЕ—ТЫРĂ

КАЛИНИНО, октябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Совет Украининчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем чĕнсе каланине кашни колхозрах сÿтсе-яваççĕ. Ăна пур тĕлте те ырласа, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ, ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе конкретлă обязательствăсем илеççĕ.

Чи малтанах пирĕн колхозсем хăйсен пĕрремĕш тивĕçне пурнăçлассишĕн — обязательство тăрăх тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парса татассишĕн тăрăшаççĕ. Государствăна тырă памалли плана тултарчă хыççăн районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнчĕç. Уйрăм колхозсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, ĕнерхи кун тĕлне 1775 пăт тырă панă.

Вăл шутран «Трактор» колхоз 300 пăт, «Çутталла» колхоз 250 пăт, «Броневик» колхоз 200 пăт панă. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси ытти колхозсенче те ăнăçлă пырать.

* * *

ЭЛЕК, октябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеççĕ. Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине кашни колхозрах кăмăлласа кĕтсе илеççĕ. Авăн çапмалли плана район 94 процент, кĕрхи çĕртме планне 90 процент ытларах тултарнă. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси те ăнăçлăн пырать. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, эпир Хĕрлĕ Çар фондне 8000 пăт тырă паратпăр. Ĕнер-кун 600 пăт ытла панă. Ку ĕçре «Трактор», «Çĕнĕ вăй», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем малта пыраççĕ, вĕсем кашниех 180—250 пăт тырă панă ĕнтĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар фондне ĕнер 90 пăт тырă пачĕ. Ку енĕпе колхозсем пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар фондне тырă парса тататпăр.

— Отечественнăй аслă вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче эпир тухăçлă тырпул туса илессишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлерĕмĕр. Пирĕн ĕç сая каймарĕ, пысăк тухăçлă тырпула пĕр тăкаксăр тата вăхăтра пухса кĕртрĕмĕр. Тăшмана пуçĕпех çапса аркатас вăхăт инçе юлмарĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çара хамăр вăйсене тата пурлăха хĕрхенмесĕр пурне те парса пулăшăпăр, — теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем.

Районри колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн колхозниксемпе колхозницăсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса парас ĕçе организацилес шутпа ĕнер кунта парти, совет тата комсомол активĕн районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Паян районра пиллĕк çĕрте колхоз тата ялсовет председателĕсен канашлăвĕсем пыраççĕ. Çав канашлусене районри мĕнпур колхозсемпе ялсовет представителĕсем пухăннă. Паян каçхине кашни колхозрах пухусем ирттеретпĕр. Унта Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яватпăр. Канашлусенче тата пухусенче чăн малтанах Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса ярас ыйту тăрать. Авăн çапассине, кĕрхи çĕрте тăвассине çак çитес 5 кун хушшинче вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хуратпăр. Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе кашни колхозрах ĕç ăнăçлă пырать.

Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен канашлăвĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассине организацилеме чĕнсе каланине кашни колхозрах хапăл туса йышăнаççĕ. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, районĕпе 13.000 пăт пама йышăннă. Çав тырра çитес 3—5 кун хушшинче государство складне леçсе парас тесе ĕçлетпĕр.

А. МАЛИНИН,
Советски райисполкомĕн председателĕ.

Муркашсем 15 пин пăт тырă параççĕ

МУРКАШ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те государствăна тырă памалли плана тултарчĕç тата МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата тыррине парса татрĕç.

Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă хыççăн районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 15 пин пăтран кая мар тырă пама пулчĕç. Уйрăмăн илсен, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Налимов юлташ) 120 пăт, «Аврора» колхоз (председателĕ Казанбаев юлташ) 200 пăт, «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ Сталев юлташ) 200 пăт, «1-ое мая» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) 150 пăт тата ытти колхозсем те нумай тырă пама пулчĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра пĕтĕмĕшпех октябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне турттарса пĕтерме палăртнă.

В. ИЛЬИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме планне тултарассишĕн

ÇĔРПУ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем тата комбайнерсемпе машиноведсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕç. Паянхи кун тĕлне МТС тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне 102 процент тултарчĕ. Пирĕн коллективри комбайнерсемпе комбайнеркăсем те уява пысăк çитĕнÿпе кĕтсе илеççĕ. Комбайн молотилкисемпе авăн çапнине шутласан, комбайнсемпе вырса пухмалли плана эпир 150 процент тултартăмăр. Комбайнер В. Иванов юлташ, 380 гектар çинчи тырпула вырса пухса, хăйĕн планне 300 процент ытла тултарчĕ. Йĕпрес МТС-ĕнчи Маркиянов комбайнерпа ăмăртакан Громов юлташ 307 гектар вырса пухрĕ.

Тракторсен 3-мĕш бригади (бригадирĕ Иванова юлташ) çулталăкри плана 170 процент, Орлов юлташăн бригади 105 процент тултарнă. Тракторсен 10-мĕш бригадинчи тракторист Трифонов юлташ тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 150 процент пурнăçларĕ, Ершов тракторист вара çулталăкри плана тултарнă хыççăн тата 50 гектар сухаларĕ.

Халĕ авăн çапса пĕтерес тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр. Кунта уйрăмах 10-мĕш бригадăри машиновед Яковлев юлташ лайăх ĕçлет. Вăл кашни кунах 30 тонна çапса, плана 200 процент тултарать. Яковлев юлташ авăн çапмалли хăйĕн пĕтĕм планне 150 процент тултарнă та ĕнтĕ. Пирĕн машиноведсемпе трактористсем кашни молотилка пуçне 500-шер тонна çапса пуçтарассишĕн ăмăртаççĕ. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапмалли тата кĕрхи çĕртме тумалли плансене ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешетпĕр.

М. АРЗАМАСОВ,
МТС директорĕ.

Ĕç хĕрÿллĕ пырать

ÇĔМĔРЛЕ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Саратов облаçĕнчи Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артель членĕсем тата Украина колхозникĕсем чĕнсе каланине трактористсемпе трактористкăсем хушшинче сÿтсе-явнă хыççăн МТС коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăнчĕ.

Халĕ пирĕн тĕп задачăсенчен пĕри вăл— колхозсене авăн çапса пĕтерме, кĕрхи çĕртме тума пулăшасси пулса тăрать. Авăн çапнă çĕрте 9 трактор ĕçлет. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте газогенераторлă тракторсем ĕçлеççĕ. Тракторист Михаил Семенов паян-ыранах çĕртме тумалли плана тултарать, анчах та вăл, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана 150 процент тултарма обязательство илчĕ.

Пирĕн МТС комбайнсемпе вырса пухмалли плана тултарчĕ. Етĕрне МТС-ĕнчи Токсубаев комбайнерпа ăмăртăва тухнă И. И. Михайлов комбайнер, хăй çине илнĕ обязательствăна чыслăн тултарса, 45 гектар планран ирттерсе вырса пухрĕ.

МТС тракторсемпе тумалли çулталăкри плана паянхи кун тĕлне 85 процент тултарнă. Çав плана эпир октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне ирттерсе тултарассишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр.

Колхозсенче ĕçленипе пĕрлех, тракторсемпе машинăсене юсас ĕçе те пуçăнтăмăр. Машинăсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен Курочкин юлташ пĕр культиватор тата 2 сеялка юсаса пĕтерчĕ.

Г. ЧУМЕЙКИН,
МТС директорĕ.

Кĕрхи çĕртме тума васкамаççĕ

Красноармейски районри Ямайкасси ялсовечĕ юлса пыракан ялсовечĕсенчен пĕри. Çак ялсоветне кĕрекен 6 колхозăн 235 гектар кĕрхи çĕртме туса хăвармалла. Хăшпĕр колхоз председателĕсем лашасем çитмеççĕ тесе, хăшĕсем МТС çине шанса ларнипе паянхи куна кĕрхи çĕртме сухине пĕтĕмпе те 50 гектара яхăн çеç сухаланă, вăл шутра—Каганович ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар, Потемкин ячĕпе тăракан колхоз 1,5 гектар. «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз (председателĕ П. Григорьев) кĕрхи çĕртме тума тытăнман та.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе ялсовечĕ ертсе пымасть.

— Колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерсен, пирĕн кĕрхи çĕртме процентчĕ хăпарать ак,—тесе ларать ялсовет председателĕ Николаева юлташ. Колхозсен ĕçĕпе паллашма вăл райкомпа райисполком представителĕсем килсен çеç, вĕсемпе пĕрле тухать.

Кĕрхи çĕртме — килес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсĕ тетпĕр пулсан, уншăн тăрăшмалла. Çĕр шăниччен юлнă вăхăтпа туллин усă курмалла.

А. ДМИТРИЕВ.

Пахчаран 200.000 тенкĕ тупăш илнĕ

Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз пахча-çимĕç туса илес енĕпе чапа тухрĕ. Вăл кашни çулах пахча-çимĕçрен çĕршер пин тенкĕ тупăш илет. Пахчаçă пулса кунта нумай çул хушши Т. В. Васильев юлташ ĕçлет.

«Красная Чувашия» колхозăн пахчи вырăнĕнче колхоз пуличчен нимĕн те ÿсмен, вăл лачакаллă-шурлăхлă вырăн пулнă. Халĕ çак вырăнта купăста-хăяр кăна мар, арбузсем, дыньăсем, сливăсем те çитĕнеççĕ. Пахча-çимĕç бригадинче 25 çын, вĕсем икĕ звенона уйăрăлса ĕçлеççĕ. Кунта çак ĕçе юратакан колхозниксем пĕрлешнĕ. Акă, сăмахран, Е. Фомина юлташ 14 çул хушши пахчара ĕçлет. 70 çулхи Д. Гаврилова, 60 çулхи А. Спиридонова юлташсем иккĕшĕ те 10 çул хушши ĕçлеççĕ. Вĕсем кашниех пахчара ĕçлесе 200—250-шар ĕçкунĕ тунă.

А. Егоровăпа А. Спиридонова юлташсем. Васильев пахчаçă ертсе пынипе, пахча-çимĕçсен çĕнĕ сорчĕсене тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Кăçал вĕсем паха сортлă, пысăк тухăçлă помидор сортне тупнă.

Колхоз государствăна пахча-çимĕç йышлăн парать. Паянхи кун тĕлне 280 центнер купăста, 14 центнер кишĕр, 30 центнер сухан, 15 центнер помидор, 30 центнер табак панă.

Çур гектар çĕр çинчен 48.000 тенкĕлĕх хăмла çырли тата хурлăхан сутнă. Питомникрен 3000 тĕп улмуççи сутса 5000 тенкĕ тупăш илнĕ. Колхоз кăçал пахча-çимĕç сутса пурĕ 200.000 тенкĕ тупăш тунă.

А. ЗАЙЦЕВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Владимир Леонтьевич Комаров академика, СССР Наука академийĕн Президентне Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне парасси çинчен

Наука тĕлĕшпе, уйрăмах та ботаника тĕлĕшпе, калама çук чаплă ĕçсем туса питĕ паха научнăй кĕнекесемпе статьясем çырнăшăн тата Совет Союзĕнчи наука учрежденийĕсене организацилес тĕлĕшпе паха ĕçсем тунăшăн СССР Наука академийĕн Президентне Владимир Леонтьевич Комаров академика, Ленин орденĕпе тата «Çурлапа мăлатук» ылттăн медальпе наградăласа, Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕ.

СССР Наукă академийĕн президентне Владимир Леонтьевич Комаров академика

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Эсир 75 çул тултарнă чаплă кун Сире çав тери чаплă ученăй тата советсен общество деятелĕ вырăнне хурса саламлать.

Наукăна, уйрăмах та ботаникăна, малалла аталантарас ĕçре Эсир пысăк вырăн йышăнса тăнипе пирĕн çĕршывра питĕ хаклă хураççĕ.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Эсир ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени малта пыракан совет наукин, хăйĕн халăхне пулăшса пыраканскерĕн, вăйĕсене хамăр Тăван çĕршыва хÿтĕлемешкĕн тата тăшмана аркатса тăкмашкăн организацилеме пулăшса пычĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, хисеплĕ Владимир Леонтьевич, нумай çулсем хушши ăнăçлăн ĕçлесе пурăнма сывлăх сунать.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Коммуналлă предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Улатăрти гостиница мала тухнă тесе йышăннă. Вăл сентябрь уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри колхозник çуртĕнчен илсе, Улатăрти гостиницăна памалла тунă. Унсăр пуçне ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа панă.

Ăмăртура мала тухнă Канашри колхозник çуртне 3.000 тенкĕ тата Çĕмĕрлери прачечнăя 2.000 тенкĕ парса премиленĕ.

Совнарком Канаш, Çĕмĕрле, Улатăр хула совет исполкомĕсен председателĕсем Кизилов, Пишкин, Вислобоков юлташсем топливо хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнманнине палăртса, вĕсене икĕ уйăх хушши ĕçлеме кирлĕ таран вутта ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне турттарса тухма хушса хăварнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 3-мĕш фронт çарĕсем, БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 2-мĕш фронт çарĕсем тÿрремĕнех пулăшнипе, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, октябрĕн 13-мĕшĕнче Совет Латвийĕн столицине РИГА хулине—пахă тинĕс-çар базине тата нимĕçсен Балтика тăрăхĕнчи оборонин хăватлă узелне— штурмласа тытса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем БИСТРИЦА хулипе пысăк чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, çав шутра — ТЕРПЕНЬ, КЕРЛЕШ, ЯД, СОФАЛЬВА, ЦИГАУ, КЕТЬЮ, БИД, ЦЕНТЯ, ТЫРГУШОР, САНТИОНА, НОСОЛЬ, ЦЕГЕ, ПУЙОН, КОРУШУ, БОНЦИДА, ДУМБРАВА ятлă пысăк ялсем тата БОРГО-РУС, ЯД, БЕССЕНЬО, СЭРЭЦЕЛ, КЕРЛЕШ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăç енерехре, пирĕн çарсем Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, МЕДУЛУЖЬЕ, ТОПОЛА, ДОЛЬНА ШАТОРНЯ, ЦРНИ, КАО, ПАНЕВАЦ, КРУШАР ятлă ялсене йышăннă тата БЕЛГРАДПА КРАГУЕВАЦ хушшинчи шоссе çулне татнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата темиçе пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 123 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 19 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Паян пирĕн çарсем Совет Латвийĕн столицине Рига хулине тытса илнĕ. Балтика тăрăхĕнчи 3-мĕш фронтăн Рига заливĕ хĕрринче çапăçакан çарĕсем Тиш Эзерс кÿлли патне пырса тухнă та çийĕнчех ун урлă каçса кайнă. Чи малтан амфиби йышши танксен подразделенийĕ каçса кайнă. Совет танкисчĕсем çав кÿлĕ урлă каçсанах Межапаркс поселокне вирлĕн тапăнса тытса илнĕ те Рига хулин хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Çав вăхăтра пирĕн ытти чаçсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тĕкса, Вяцати чугун çул станцине тата Вяцмилгрависпа Яунмилгравис поселокĕсене тытса илнĕ. Квартал хыççăн квартала, урам хыççăн урама гитлеровецсенчен тасатса пырса, пирĕн çарсем ирхине ирех Рига портне вăркăнса кĕнĕ те ăна тытса илнĕ. Рига таврă тунă оборонăн шалти ункин хĕвелтухăç енчи секторĕнчи укреплениесене кĕрсе ларнă нимĕçсем уйрăмах хаяррăн хирĕç тăнă. Совет çарĕсем, вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапса, тăшман хирĕç тănине çĕмĕрсе тăкнă. Урамра ытла та хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн боецсем çĕнĕрен хастарлăхпа паттăрлăхăн тата питĕ пĕлсе çапăçнин калама çук чаплă тĕслĕхĕсене кăтартнă. Тул çутăлса килнĕ вăхăтра Рига хулин хĕвелтухăç пайне пĕтĕмпех тытса илнĕ. Ирхине 8 сехетре совет чаçĕсем Хĕвелтухăç Двина шывĕ урлă каçнă та хулан хĕвеланăç пайне штурмлама тытăннă. Каç пулнă тĕле пирĕн çарсем Совет Латвийĕн столицине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса çитернĕ. Рига хулишĕн çапăçса, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк сухатусем тÿснĕ. Пирĕн çарсем тупăсем, пулеметсемпе минометсем, автомашинăсем, çар пурлăхĕ хунă складсем тата вагонсемпе платформăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Паланга хули районĕнче (Балтика тинĕсĕ хĕрринче) тăшман пирĕн çарсен тылне десант антарма хăтланнă. Тăшманăн 24 карапĕ çыран патне çывхарнă. Совет çарĕсем, татăклăн кĕрешсе, тăшмана десант антарма паман. Пирĕн артиллери персе тата авиаци бомбăсем пăрахса, нимĕçсен 4 баржине путарнă. Тăшман салтакĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем нумайĕшĕ шыва путнă. Шыва путарнă баржăсем çинче пулнă 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Хĕвелтухăç Карпат тăвĕсем урлă каçса, Бистрица шывĕ патне пырса тухнă. Тăшман меллĕ рубежсенче çирĕпленсе ларнă, çав шыв тăрăх выртакан çÿллĕ вырăнсене оборонăн вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕсем туса хунă. Гитлеровецсем Бистрица шывĕ çинчи мĕнпур кĕперсемпе каçăсене сирпĕнтерсе янă. Пирĕн пехотинецсем, тĕтре тăнипе усă курса, Бистрица хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăç енерехре тата кăнтăр-хĕвеланăç енерехре çав шыв урлă каçса кайнă. Çав вăхăтрах совет подразделенийĕсем хуларан тухса каймалли пур çулсене те тытса илнĕ те тăшмана каялла чакма паман. Нимĕçсемпе венгерсем хăйсене çавăрса илнĕ ункăран тухма хăтланнă, анчах та вĕсене пур çĕрте те совет автоматчикĕсем сыхласа тăнă. Пур енчен те татăклăн пыра-пыра çапса, пирĕн çарсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та паян ирхине Бистрица хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

Ĕнер йышăннă Орадеа-Маре хулинче пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ, çав шутра 78 тупă. Нимĕçсемпе венгерсен 1.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ октябрĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче Баренц тинĕсĕ çинче тата Киркенес портĕнче тăшман карапĕсене пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен 6 транспортне, пĕр миноносецне, 4 хурал карапне, пĕр тральщикне, 5 баржине, 5 хурал катерне тата 9 мотоботне шыва путарнă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

Октябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çурçĕр флочĕн торпеда катерĕсем нимĕç суднисен караванне атакăланă. Пĕрле 10.000 тонна таякан 2 транспортне тата хурал карапне сирпĕнтерсе янă та шыва путарнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем тăшманăн 6.000 тонна таякан транспортне путарнă. Çав флотăн авиацийĕ Балтика тинĕсĕ çинче нимĕçсен 4.000 тонна таякан транспортне путарнă.

Кашни колхозрах сад-пахчи пултăр

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн колхоз хресченĕсем пысăк тухăçлă тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми тата ытти [illegible] туса илес ĕçре пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Халĕ пирĕн колхозлă ялта ĕç питех те нумай. Пур тĕрлĕ тырпула та пухса кĕртмелле, вăйпа çапса пĕтермелле, государство умĕнчи обязательствăсене парса татмалла, кĕрхи çĕртме тумалла, выльăхсене хĕле хатĕрлемелле тата ытти те.

Ялхуçалăхĕн хĕрÿллĕ ĕçсем вăхăтĕнче те малта пыракан колхозсем пирĕн республикăри колхозниксен юратнă ĕçне — сад-пахчисене лартса ÿстерессине манса каймаççĕ.

Сад-пахчи вăл ялхуçалăхĕн пысăк тупăш паракан пайĕ. Хаяр сивĕ хĕлсем пулнă пирки пирĕн республикăри сад-пахчисем [illegible] колхозсем сад-пахчисенчен нумай тупăш илетчĕç.

Ишлей районĕнчи «Сĕнкĕл» колхоз кăçал панулмисем сутса кăна 400.000 тенкĕ тупăш илчĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ ялхуçалăхĕн малта пыракан колхозсем 1944 çулхи февраль 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ республикăри ялхуçалăхĕн малтисен канашлăвĕнче социализмлă обязательствăсем çапла çырса хăварнă: «1944 çулта [illegible] сад-пахчисене [illegible] чĕртмелле [illegible].

Колхозниксен кил выранĕнче 10—15 тĕпĕн кая мар улмуççисем, 20—25 тĕпĕн кая мар çырла йывăççисем лартмалла.

[illegible]

Кувакино районĕнчи Суворов ячĕллĕ тăракан колхозра (унта садовод пулса Сельсов юлташ ĕçлет) вăйсе пĕтнĕ сад-пахчине пĕтĕм лаптăкĕпех чĕртнĕ, сад-пахчин лаптăкĕ 58 гектартан та ытларах.

Республикăри ытти нумай колхозсем те сад-пахчисене чĕртсе ĕрчетме вăхăт та, вăй та тупаççĕ. [illegible]

[illegible]

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1940 çулхи февраль 21-мĕшĕнче йышăннă постановлени [illegible] кил выранĕнче 15—20 [illegible] лартмалла.

Колхозниксен кил выранĕсенче [illegible]

Кашни колхозникĕн хăйĕн кил выранне [illegible] мĕссе, йывăççисене турттарса килес ĕçре те йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ. Колхоз правленийĕсен ку тĕлĕшпе ĕçе организацилесси çине хăйсем çине илмелле. Питомниксемпе калаçса татăлмалла та вĕсенчен улмуççисемпе çырла йывăççисене колхоза илсе килсе, колхозниксене валеçсе памалла.

Халĕ, сăмах майĕн каласан, улмуççисем ытлараx илеççĕ. Анчах чей çырли, слива, хăмла çырли, хурлăхан йывăççисен çамрăк хунавĕсене лартса хăварни те питĕ усăллă. Вĕсем кĕркунне лартса хăварсан лайăх чĕрĕлеççĕ.

Тепĕр енчен, çырла йывăççисене лартни çакăнтан та питĕ усăллă: вĕсем 2—3 çултан çимĕç пама тытăнаççĕ. Пирĕн республикăри питомниксенче чей çырли, слива, хăмла çырли йывăççисем куçарса лартмалли хунавсем çителĕклĕ.

Ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх та пирĕн колхозсенче кашниничех 3—5 гектартан кая мар сад-пахчисем пулмалла. Хăшпĕр колхозсенче сад-пахчи валли çур гектар е унтан та каярах уйăраççĕ. Паллах, колхозшăн çакăн пек лаптăк ытла та сахал ĕнтĕ. Çакăн пек пахчасенчен пухса илнĕ çимĕçсем сутма мар, колхозшăн хăйшĕн те çителĕксĕр. Унсăр пуçне, çавăн пек пĕчĕк лаптăка лартнă сад-пахчи çине никам та тивĕçлипе çаврăнса пăхас çук. Çавăнпа та кашни колхозрах сад-пахчин лаптăкĕ 3—5 гектартан кая пулмалла мар, кăçал вара кĕркунне сахалтан та пĕрер гектар лартса хăвармалла.

Сад-пахчине малтанхи йывăççене лартсан, йĕри-тавра карта тытмалла, йывăççене пăхса тăма шанчăклă, ĕçе пĕлекен çынна уйăрмалла тата хурал ĕçне те лайăх йĕркелемелле.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, орденлă Чăваш республикинчи колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес-сишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Çак анлăн сарăлса кайнă ăмărту вăхăтĕнче колхозсенче сад-пахчисем лартса хăварассишĕн те тăрăшмалла.

Кашни колхозра сад-пахчи пултăр, кашни колхозникĕн кил выранĕнче çимĕç йывăççисем çитĕнччĕр. Чăваш ялĕсен авалхи мухтавне чĕртер, сад-пахчисемпе çырла пахчисене анлăн ĕрчетсе ярар, хамăрăн колхозниксене чечекленекен çимĕç йывăççисем хушшинче савăнса культурăллă та пуян пурнăçпа пурăнмалла тăвар!

Н. МАЛОВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

ВЦСПС-па Топливо промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па Топливо промышленность Халăх Комиссариачĕ предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Атăл леш енчи торф кăларакан предприятие иккĕмĕш преми памалла тунă.

Ÿкерчĕк çинче: Чăлха фабрикинчи чи лайăх стахановка А. Андрианова юлташ. Вăл 15 машина вырăнне 18 машинăпа ĕçлет, кулленхи нормăна 106,5 процент тултарса пырать.

С. ФРИД фотоÿкерчĕкĕ.

Социализмлă ăмăрту вăйĕ

Пирĕн Йĕпреçри «Красный строитель» артель коллективĕ, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ чĕнсе каланине йышăнса, сентябрьти плана 120 процент тултарма пулчĕ. Цехсен коллективĕсем тата кашни уйрăм рабочи ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма сăмах пачĕç.

Илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесе, эпир чылай ĕçсем тăватпăр. Ăмăртăва хутшăннă хыççăнах агитаторсем цехсенче рабочисемпе работницăсене обязательствăсене пурнăçлани фронтпа çĕршывшăн пахa ĕç пулни çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Малалла вĕсем, цехсенче кашни кун пулса, ăмăрту мĕнле сарăлса пынине тĕрĕслесе пычĕç, ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме пулăшрĕç. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту ыйтăвĕсене ятарласа кăларнă стена хаçатĕнче çутатса патăмăр. Çав хаçатра стахановецсен пахa ĕçĕсене çырса кăтартнă, кахалсене питленĕ. Агитколлектив пулăшнипе кăтарту хăми организацилерĕмĕр. Унта стахановецсен ячĕсене кĕртетпĕр.

Ăмăрту итогĕсене эпир кашни вунă кунрах пĕтĕçтерсе, мĕнпур рабочисене пĕлтеретпĕр. Çак ĕçе тума йывăр мар. Мĕншĕн тесен пирĕн артельри кашни цех, кашни мастер аллинче ĕç графикĕ пур. Мастерсемпе рабочисем хăйсен паян мĕн тумаллине яланах пĕлсе тăраççĕ.

Социализмлă ăмăртăва пур рабочисене те хутшăнтарни, обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе пыни, кая юлакан рабочисене кулленхи ĕçре пулăшни стахановецсен йышне ÿстерме май пачĕ. Халĕ артельте 19 стахановец. Вĕсем нормăна 150—200 процент таран тултарса пыраççĕ. Отличниксем — 8 çын. Вĕсем 2-шер е 3-шер норма тултараççĕ. Ударниксен йышĕ те ÿссех пырать. Вĕсен ретĕнче халĕ 26 çын шутланать. Уйрăм стахановецсем кунран кун çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Çапла, кÿршек-чашăк тăвакан мастер, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Иван Корчагин 5 норма тултарать. Кирпĕч тăвакан цехри формовщицăсем Майоровăпа Гусева юлташсем 600-шер кирпĕч вырăнне 1000-шер кирпĕч тăваççĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннăранпа нумай цехсем хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Ата-пушмак тăвакан цех коллективĕ, сентябрь уйăхĕнчи плана 214.5 процент тултарса, пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Кÿршек-чашăк тăвакан цех коллективĕ те нумай кая юлман, вăл сентябрьти плана 149,5 процент тултарнă. Артельте плана 120 процентран кая тултаракан цехсем пачах пулмарĕç. Çакна пула вара пирĕн артель сентябрьти плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 121,6 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 122,4 процент тултарнă. Сентябрь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхĕ 18 процент ытла ÿснĕ.

Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир стахановецсемпе мастерсен канашлăвне ирттертĕмĕр. Унта хамăрăн иртнĕ 9 уйăх хушшинчи ĕçсен итогĕсене тишкĕрсе тухса, умра тăракан задачăсем çинчен сÿтсе яврăмăр. Канашлура мастерсемпе стахановецсем нумай тухса каларĕç. Вĕсем артель ĕçне лайăхлатмалли пахa сĕнÿсем пачĕç.

Эпир хамăр умма октябрьти плана 150 процентран кая мар тултарас задача лартрăмăр. Унсăр пуçне тата ĕç тухăçлăхне 20 процент ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент йÿнетме, чĕртаварсемпе топливăна перекетлеме, хĕле тĕплĕн хатĕрленме пултăмăр. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ кашни цех, кашни мастер, кашни рабочипе работница кĕрешĕве тухрĕç. Октябрь уйăхĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинчех чылай цехсем çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Ата-пушмак юсакан цех коллективĕ уйăхри плана 10 кун хушшинчех тултарчĕ. Тимĕрçĕ лаççинче Татовпа Егорова юлташсем, вутă турттарнă çĕрте Тихоновпа Воронцов юлташсем лайăх ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем пире хастарлăн ĕçлеме çĕнĕ вăй-хăват параççĕ. Уяв умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пырса, эпир хамăр илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех тата вăхăтра пурнăçа кĕртетпĕр.

Д. МИХАЙЛОВ,
«Красный строитель» артель председателĕ.

Сталинла вахтăна тăраççĕ

КУСЛАВККА. Комбинатри комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе, сталинла вахтăна тăраççĕ. Бродский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри П. Ефремова юлташăн бригади сталинла вахтăна тăнă хыççăн кулленхи нормăна 250 процент таран тултарса пыма тытăнчĕ. Вăл бригадăри А. Исачкин, А. Тимофеева, А. Иванова юлташсем кулленех вицшер норма таран пурнăçлаççĕ.

Çавăн пекех Шутов юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Б. Худяков, В. Викторчик, М. Жолобов, Давыдов юлташсен бригадисем те производство планне тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

Юлашки кунсенче комбинатра комсомолецсемпе çамрăксенчен çĕнĕрен 6 бригада организациленĕ.

В. КАРПОВ.

КУЛЛЕН 31,8 ПРОЦЕНТ ЫТЛАРАХ ÇĔРКĂМРĂК КĂЛАРНА

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, çĕркăмрăк бассейнĕсенче ĕçлекен горняксем сентябрь уйăхĕнче топливо чылай ытларах кăларнă. Чи пысăк комбинатсемпе трестсем, çав шутра Донбасс, Москвоуголь, Кузбассуголь тата ытти комбинатсем уйăхри задание пĕтĕмпех тата ирттерсе те пурнăçланă.

Сентябрь уйăхĕнче, 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, куллен 31,8 проц. ытларах çĕркăмрăк кăларнă. (ТАСС).

Тĕнчери лару-тăру

Иртнĕ эрнере фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсем хăйсен çурăмĕ çинче Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен хăватлăн пыра-пыра çапнине тÿссе ирттерчĕç. Совет Союзĕпе Германи фронтĕн çурçĕрти участокĕнче Хĕрлĕ Çар пуçласа янă хăватлă наступлени мĕнпур вăрçă ĕçĕсемшĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хĕрлĕ Çар, тăшманăн Шауляй хулинчен хĕвеланăçнерехри вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татса, Балтика тинĕсĕ патне тухрĕ. Çапла вара нимĕçсен Рига—Либава—Виндава районĕнчи çар группировкин каялла чакмалли çулĕсене татма кăна мар, Хĕвелтухăç Пруссие те тÿрремĕнех хăрушлăх умне тăратнă.

Геббельсăн яланхи обозревателĕ Дитмар хăйĕн черетлĕ обзорĕнче, шикленсе ÿксе, ирĕксĕрех çакна йышăннă: «Çав наступлени пысăк пĕлтерĕшлĕ наступлени пулса тăрать», тенĕ вăл. Нимĕçсем халь тÿснĕ пораженипе ăнсăртран килсе тухни нимĕн те çуккине, мĕншĕн тесен çакă вăл Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи мĕнпур операцисем аталанса пынинчен тухса тăнине радио-генерал питех те кая юлса йышăннă. «Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсен чылай пысăк пайне сухатнине тÿссе ирттерме Германи командованийĕшĕн çăмăл пулман. Анчах та çакă вăл вăтаçĕрти фронт арканса кайнă хыççăн çапла пулса тăчĕ, çавăн пек аркану хыççăн вара çурçĕрте малашне хирĕç тăма та май çук пулса тăчĕ», —тенĕ Дитмар.

Нимĕçсем çурçĕрте хирĕç тăнă пулĕччĕç, вĕсем хирĕç тăнă та, анчах Хĕрлĕ Çар вĕсен мĕнпур ĕмĕчĕсене ÿпĕнтерсе хучĕ. Çакăн çинчен Дитмар нимĕн те шарламасть. Çĕнĕ пораженисем тÿсессине курса тăрса, вăл нимĕç обывательне çав поражениесене кĕтсе илме асăрхануллăн хатĕрлеме тăрăшать. «Эпир халĕ Германи крепоçне хÿтĕлетпĕр, çав крепоçăн тулашри кашни тĕрекĕ кучухнехи лару-тăрура вăхăтлăха çеç усă кÿрет»,—тесе сÿпĕлтетет генерал.

Радио-генерал ĕнтĕ çакна йышăнать: вăтаçĕрти фронт арканса кайни нимĕç оборонин çурçĕрти флангĕ арканса каясси патне илсе пычĕ. Анчах нимĕç çарĕсене çав фронтра пыра-пыра çапни нимĕç оборонин ытти участокĕсенче те пур-пĕрех палăрасси çинчен вăл калама хăрать.

Кăнтăрта Хĕрлĕ Çар Трансильвани столицине — Клуж хулине, çавăн пекех тата Венгрин пысăкĕшĕпе иккĕмĕш вырăнта тăракан Сегед хулине, Орадеа-Маре хулине йышăнса илчĕ те Дебрецен хули патне тухрĕ. «Вăрçă ĕнтĕ хăйĕн мĕнпур вăйхăвачĕпе Венгри территорийĕ çине çĕмĕрсе кĕчĕ», тесе ирĕксĕрех йышăнаççĕ Венгри хаçачĕсем. Венгрири влаçра тăракан ушкăнсен ухмахла политикин инкекĕсене венгер халăхĕ ĕнтĕ хăй тÿссе курать. Будапешт хулинче пăлханусем пуçланнă, халăха хуларан куçарма тытăннă. Нимĕç посольстви Венгри столицинчен тухса тарнă, мĕншĕн тесен шанчăксăр лару-тăру халĕ ĕнтĕ нимĕçсем умне уççăнах тухса тăчĕ. Венгрин малашне Германи тарçи пулса тăма вăйĕ çитмест. Вăл ĕнтĕ, вилес патне çитнĕ пек, аран сывлать. Вăл пĕтĕмĕшпех поражени тÿсесси инçе юлмарĕ, çакăн хыççăн вара фашистла блокăн юлашкисем те пĕтĕмĕшпех çапаланса кайĕç.

Хĕрлĕ Çар кăнтăрта хăватлăн пыра-пыра çапни фронта гитлерла Германин чи пахa районĕсем патне çав тери хăвăрттăн çывăхартса пырать. Çав участокра нимĕçсен нумай вăйсем тытса тăма тивет. Лондонри «Таймс» хаçат çирĕплетсе каланă тăрăх, вырăссем Балканра пуçласа янă кампание пула, Германин унта 60 дивизие яхăн тытса тăма лекет. Çав цифра вăл питĕ нумая пĕлтерет, мĕншĕн тесен, ют çĕршывсенчи обозревательсем каланă тăрăх, Германин хĕвеланăçĕнчи мĕнпур фронта хÿтĕлесе тăма пĕтĕмпе те 30 дивизи кăна пур. Çапла ĕнтĕ гитлеровецсен ĕçĕ хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнчи пекех, пачах та шанчăксăр.

Пирĕн Союзниксем тăшманăн позицийĕсене малалла хĕссе пыраççĕ, вĕсем Аахенпа Мец районĕсенче çапла малалла куçаççĕ. Нимĕçсен Аахен хулинчи парăнма килĕшмен гарнизонĕн çăлăнса тухма нимĕнле шанчăк та çук. Дитмар çухалса кайса çакна палăртать: Германие пĕр вăхăтрах хĕвелтухăçĕнчен те, хĕвеланăçĕнчен те тата кăнтăртан та хытă пыра-пыра çапассĕ, тесе чăйкăшать вăл. «Пире хирĕç тăракан çĕршывсем хăйсен мĕнпур ĕçĕсене анлăн килĕштерсе туса пыраççĕ» тесе шухăшласа, эпир тĕрĕс тăватпăр»,—тет вăл. Гитлера хирĕçле çĕршывсем вăрçăра пĕр-пĕринпе килĕштерсе кĕрешни гитлерла Германие арканса каясси патне илсе çитересси радио-генерал Дитмар лайăх ăнланать.

* * *

Гитлерла çамрăксен руководителĕ Аксман — нимĕç çарне 1928 çулта çуралнă çамрăксен 70 процентне илни çинчен каланă. Çапла ĕнтĕ, татăклă çапăçу умĕн гитлеровецсен, 15—16 çулхи çамрăксемсĕр пуçне, урăх резервсем çукки курăнса тăрать. Çавăнпа та фашистла нимĕç пропаганди шикленсе ÿкнĕ нимĕç халăхĕн чун-хавалне мĕнле те пулин çĕклеме хăтланни ахалех путлана-путлана ларать. Малашнехине шанманни, хăраса ÿкни, шикленни правительство ячĕпе тухса калакансен «хавхалануллă» сăмахĕсенче те уççăнах палăрса тăрать. Ку енĕпе паллă Лей «Ангрифф» хаçатра пичетлесе кăларнă статья питех те витĕмлĕ тĕслĕх пулса тăрать. Çав статьяра кашни сăмах хыççăн уйрăм асăрхаттарса хăварни пур. «Хĕвелтухăç фрончĕ çирĕп тăрать!» тесе хавхалануллăн кăшкăрать Лей. Анчах вăл çавăнтах çапла хушса хурать: «паллах, çав фронт хăшпĕр тĕлте хумханса илме пултарать, пирĕн хăрушă сехетсем тÿссе ирттерме лекет», тет вăл.

«Нумай ретлĕ оборона системине тунă эпир, çакă вăл хĕвеланăçĕнчи валăн çирĕпĕшне çĕнĕрен ÿстерет», — тесе çырать вăл малалла. Анчах çавăнтах çапла хушса хурать: «Кирлĕ пулсан, эпир Берлин патне çитиччĕнех пĕр лини хыççăн тепĕр лини туса тухма пултаратпăр», тет вăл. Çаплах каланă — «Берлин патне çитиччĕнех», тенĕ. Лей хăй те халĕ çакăн пирки иккеленмест пулĕ: союзниксен çарĕсем Берлинра тĕл пулаççĕ те ĕнтĕ, вĕсем фашистла Германин «нумай ретлĕ оборонине» пĕтĕмпех шăлса пăрахаççĕ. Лей пуçĕпех çухалса кайса çапла калать: «Эпир хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те çĕнĕ çĕнтерÿллĕ наступлени пуçласа ямалли самант çитиччен чăтса тăрăпăр. Кунерсдорф хыççăн Лейтен пулĕ», тет вăл.

Истори нимĕçсене çĕнĕ, «çĕнтерÿллĕ наступлени» тума текех май памĕ. Хăй тăмсайĕшне кура е вулакансем тăмсай пулĕç тесе шутласа, Лей фактсене суйса кăтартса парать. Çакă пуриншĕн те паллă: II-мĕш Фридрих 1757 çулта Лейтен патĕнче çĕнтерÿ тунă хыççăн 1759 çулта Кунерсдорф патĕнче поражени тÿснĕ. Ку ĕнтĕ пĕрре те гитлерла çыравçă кăтартса пама хăтланнă пек мар пулса тухать. Истори вĕсенчен хытă мăшкăлласа кулĕ.

* * *

Гитлерла Германи поражени тÿсесси курăнсах тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрçă хыççăн нумай вăхăтлăха çирĕп мир туса, ăна сыхласа тăрас тата агрессиллĕ ĕçсем çĕнĕрен пуласси не чарса лартас тĕлĕшпе ĕçлеме пĕтĕм тĕнчери организаци тăвасси çинчен ыйту лартни питех те вăхăтлă ĕç пулса тăрать. Союзлă çĕршывсен представителĕсен Думбартон-Оксра пулса иртнĕ конференцийĕн материалĕсемпе халĕ пур те интересленеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăха сыхлакан организаци тумалли проекта сÿтсе явнă чухне, ирĕклĕхе юратакан халăхсен представителĕсен пĕтĕм тĕнчери иртнĕ вăрçăн опытне тата нацисен лигийĕ панкрута тухнине шута илмелле пулнă. Нацисен лиги çак вăрçăшăн айăплă пулса тăракан çынсене çавăрлăхласа хума вăй тупайман. Çавăнпа та ĕнтĕ проектра аслă державăсене пысăка хурса хакланă. Мире сыхласа усрас тĕп ответлăх çав аслă державăсем çинче тытăнса тăма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вĕсен аллинче агрессие сирсе ямалли пур майсем те пур. Çакă уççăн курăнса тăрать: çавăн пек çирĕп мирĕн никĕсĕ тата ирĕклĕхе юратакан халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ăнăçлăн ĕçлессин никĕсĕ аслă державăсем пĕр шухăш-кăмăллăн пурăнни пулса тăрать.

Думбартон-Оксри конференци вăрçă хыççăн çирĕп мир туса хурас çул çинче чылай пысăк утăм тунине пĕлтерет. Совет Союзĕнчи, США-ри, Англири тата ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсенчи общественность Думбартон-Оксри калаçусен итогĕсене çавăн пек кĕтсе илсе хакларĕ те ĕнтĕ.

Конференци решенийĕсене пирĕн тăшмансем хăйсен çиллине пытараймасăр, тарăхса кĕтсе илчĕç. Анчах çакă вăл гитлерла Германие çĕнтернĕ хыççăн çирĕп мир тăвас ыйтусене сÿтсе-явнă çĕрте ирĕклĕхе юратакан халăхсем тĕрĕс çул çинче тăнине татах та тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Я. ВИКТОРОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

РЕМЕСЛО УЧИЛИЩИСЕМПЕ ФЗО ШКУЛĔСЕМ ВАЛЛИ 10.000 МАСТЕРПА ВОСПИТАТЕЛЬ ВĔРЕНТСЕ КĂЛАРНА

Ĕç резервĕсен крайсенчи, облаçсенчи тата хуласенчи управленийĕсем производствăна вĕрентекен мастерсен курсĕсене организациленĕ. Кăçал çав курссем 3.000 специалист ытла вĕрентсе кăларнă. Вĕсене ремесло училищисемпе ФЗО шкулĕсене янă.

Кунсăр пуçне, мастерсен, воспитательсен тата военруксен квалификацине ÿстермелли курссем уçнă. Çав курссенче вĕренсе, темиçе пин çын хăйсен квалификацине ÿстернĕ.

Тĕрлĕ курссем кăçал ĕç резервĕсен системинче ĕçлекен 10.000 мастерпа ытти работниксене вĕрентсе хатĕрленĕ. (ТАСС).

ЙЫВĂÇРАН, ЧУЛТАН ТАТА ШĂМĂРАН ИЛЕМЛĔ ЯПАЛАСЕМ ТĂВАКАНСЕН КОНКУРСĔ

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промысла кооперацийĕн управленийĕ, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен комитечĕ тата илемлĕ япаласем тăвакан промышленноçăн Наукăпа тĕпчев институчĕ йывăçран, чултан тата шăмăран чи илемлĕ япаласем тăвакансен пĕтĕм Союзри конкурсне ирттереççĕ. Çав конкурса Холмогорти, Загорскри, Узбекистанри тата ытти çĕрсенчи чапа тухнă мастерсем хутшăннă. Халĕ Мускава вĕсем тунă япаласем пыма пуçланă. Илемлĕ япаласем çинче — шкатуркăсем, савăт-сапа, сĕтел-пукан тата килте кирлĕ ытти япаласем çинче — çав мастерсем Аслă отечественнăй вăрçăри паттăрлăха, çирĕп халăхăн авалхи пурнăçне, вырăссен авалхи халлапĕсемпе былинисенчи ĕçсене ÿкерсе кăтартнă. (ТАСС).

ЧАПЛА КОМБАЙНЕР 3.000 ГЕКТАР ЫТЛА ТĔШТЫРĂ ПУХСА ИЛНĔ

Алтай крайĕнчи Буденновски МТС комбайнерĕ Семен Пятница, икĕ «Сталинец» пĕрле кăкарса, 3.082 гектар тĕштырă вырса пуçтарнă, 2.400 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Семен Пятница комбайн çумне уйăн тухăçлăхне ÿстермелли тата ăна лайăх ĕçлеттермелли тĕрлĕ хатĕрсем майлаштарса лартнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи тăватă çул хушшинче вăл 10.000 гектар тырă вырса пуçтарнă, 10 тонна горючи перекетлесе хăварнă. (ТАСС).

АШШĔ-АМĂШĔСЕН УНИВЕРСИТЕЧĔСЕМ

Киев хулинче ашшĕ-амăшĕсен виçĕ университечĕ уçăлнă, вĕсене хулари лекци бюровĕ уçнă. Çав университетсен задачи— ашшĕ-амăшĕсене хăйсен ачисене тĕрĕс вĕрентсе ÿстерме пулăшасси. Вĕсенче виçĕ уйăх вĕренмелле. Çав вăхăт хушшинче хуларн чи лайăх педагогсем «Ачасене коммунистла вĕрентсе ÿстерессин задачисем», «Ашшĕ-амăшĕсен авторитечĕ», «Характера пăхса çитĕнтересси» тата ытти темăсемпе те лекцисемпе докладсем вуласа параççĕ. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ФРОНТОВИКСЕН АЧИСЕНЕ ПУЛĂШМА

Елчĕк районĕнчи колхозсенче фронтовиксен шкула вĕренме çÿрекен ачисене пулăшма тумтирсем, апат-çимĕçсем пухассине сарăлса пырать. Аслă Елчĕкре 52 килограмм çăм, 12 тир пухнă. Çĕнĕ Пăва ялсоветне кĕрекен колхозсенче икĕ кун хушшинче кăна 12 килограмм çăм тата чăлхасемпе çĕлĕксем пухса панă. «Звезда» колхоз пĕр центнер тырă, 5 килограмм çăм панă.

ТĂЛĂХ АЧАСЕН ÇУРЧĔ

Первомайски районри Бакашево ялĕнче тăлăха юлнă ачасене усрама çурт уçнă. Унта халĕ 11 ача пурăнать. Вĕсенчен саккăрăшĕ шкула вĕренме çÿреççĕ. Ачасене лайăх пăхса усраççĕ, апат та лайăх çитереççĕ.

АНĂÇЛĂ ОПЕРАЦИ

Советски районри Издеркино ялĕнчи Н. Захаров юлташăн виçĕ çул каялла сулахай куçĕ, икĕ çул каялла тата сылтăм куçĕ курми пулнă. Кăçал вăл август уйăхĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Обыковăри больницăна пынă. Врач Тайков юлташ унăн куçĕсене операци тунă. Операци ăнăçлăн иртнĕ. Халĕ Захаров юлташ, икĕ çул курмасăр пурăннă хыççăн, татах курма пуçланă. Вăл вулама та пултарать. Захаров юлташ хăйне сыватнăшăн Тайков юлташ патне тулли кăмăлпа тав туса çыру янă.

РАЦИОНАЛИЗАЦИПЕ ИЗОБРЕТАТЕЛЬСТВО СĔНЕВĔСЕНЕ ПУХМАЛЛИ УЙĂХЛĂХ

Канашри вагонсем юсакан заводра рабочисемпе инженерла-техникла работниксен 1943—1944 çулсенче панă рационализацие изобретательство сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртнипе 667.000 тенкĕ перекетленĕ. Халĕ заводра сĕнÿсем пухас енĕпе уйăхлăх пырать. Вăл ноябрĕн 1-мĕшĕччен пырать.

752 ВЫЛЯВ

Красноармейски районри ĕççыннисем укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсемпе 752 выляв илнĕ. Укçапа шутласан, вăл 116.100 тенкĕлĕх ытла пулать. Укçан выляса илнĕ пысăк вылявсем хушшинче пĕр выляв 5.000 тенкĕлĕххи, 15 выляв 1.000-шер тенкĕлĕххисем пур. Япаласем выляса илнисен шутĕнче 1.500 тенкĕ тăракан костюмсем 5 тата 240 тенкĕ тăракан пĕр кĕмĕл сехет пур.

ЮРĂПА ТАШĂ АНСАМБЛĔ КОЛХОЗСЕНЧЕ

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ Советски районри колхозсенче пурĕ 10 çĕрте ытла пулчĕ. Ансамбль репертуарĕнче чăваш тата вырăс халăхĕсен, совет композиторĕсен юррисем, Совет Союзĕнчи халăхсен ташшисем пур. Ансамбле колхозниксем кăмăлласа кĕтсе илеççĕ.

Промартельте ĕçлекенсем колхоза авăн çапма пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Аслă Таяпари çĕвĕпе тĕрĕ тĕрлекен артельти хĕрарăмсем каçхи сменăра Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоза авăн çапма пулăшаççĕ. Ку ĕçе артель председателĕ Фомина юлташ хăй ертсе пырать. Артель членĕсем кăнтăрла хăйсен ĕçне тăваççĕ, çĕрле колхозра авăн çапаççĕ. Каçхи сменăра пурте тенĕ пекех ĕç нормине ытлашшипех тултараççĕ.

Н. САМАРКИНА.

Финанс работникĕсен ăмăртăвĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри финанс работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи виççĕмĕш кварталти итогĕсене тунă. Ăмăртура Октябрьски районри финанс отделĕ мала тухнă. Вăл виççĕмĕш кварталта халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана 151,4 процент тултарнă. Çакна хисепе илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Октябрьски районри финанс отделĕнчех хăвармалла тунă. Унсăр пуçне ăна 12.000 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Хаçатра тухнă материалсем пирки
„Утта салатса пĕтереççĕ"

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра çав ятлă заметка пичетленсе тухнăччĕ. Ку заметкăра Ишлей районĕнчи Чантăрти «Волгарь» колхозра çулман çаран пурри тата çулнă утта салатса пĕтерни çинчен çырнăччĕ.

Ишлей райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Г. Лазарев юлташ пĕлтернĕ тăрăх, çав ĕçсене вырăна тухса тĕрĕсленĕ. «Волгарь» колхозăн Атăл леш енчи çаранĕ 20,1 гектар шутланать. Вăл шутран 5 гектарне колхоз подсобнăй хуçалăхпа çурмалла çулнă. 16,1 гектарĕ çинче вĕтлĕх нумай тесе çулмасăр хăварнă. Çулнă утта 560 килограмм чăн та сутнă.

Колхозри çĕрпе усă курас йĕркене пăснăшăн тата ытти айăпсемшĕн те колхоз председательне Мартынова ĕçрен кăларса суда панă. Халăх сучĕ ăна 1 çулталăк та 6 уйăха тĕрмене хупмалла тунă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Шельда шывĕн вăрринче Брескенс хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çĕнĕ çарĕсем пырса аннă. Çав районра питĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Голландире союзниксен çарĕсем саваллапса кĕнĕ районăн хĕвелтухăç енчи участокĕнче союзниксен çарĕсем Оверлоон хулине тытса илнĕ.

Гаарен тата Вюрселен хулисенче тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе пыраççĕ. Штольберг хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем кăштах малалла кайнă. Гюртген секторĕнче союзниксен çарĕсен чаçĕсем Воссенак хулине çитнĕ, анчах та тăшман контратакăсем тунине пула, кăшт каялла чакнă.

Моншау хулинчен кăнтăртарахра патрульсем кĕрешнĕ. Люневиль хулин леш енче союзниксен разведка тăвакан отрячĕсем Парруа вăрманĕн хĕвелтухăç хĕррине çитнĕ. Парруа хулине тăшмантан тасатнă.

Эпиналь пе Бельфор хулисен секторĕнче союзниксен çарĕсем Мовелотт шывĕн кукринче чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Çав районра тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене вăйлăн пулăшнă. Çапăçусен районĕнче тăшманăн çарĕсем çине, мототранспорчĕ çине тата танкĕсемпе артиллерийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Темиçе çĕр истребитель-бомбардировщик ĕнер Аахен хулине тапăннă. Сывлăшра хула тĕлĕнче пулса иртнĕ çапăçура тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ. Кунсăр пуçне, Альденгофен тата Лангервег хулисене тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тăрăхĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: 5-мĕш арми фронтĕнче Флоренцие пе Болонья хушшинчи çул тăрăх вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă, анчах та позицисем вăйлах улшăнман.

8-мĕш арми фрончĕн Адриатика тинĕс хĕрринчи участокĕнче союзниксен чаçĕсем Римини хулипе Болонья хули хушшинчи чугун çултан кăнтăртарахри сăртлă вырăнта малалла куçса пынă, икĕ ял тытса илнĕ.

Союзниксен самолечĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем тăшманăн Болонья районĕнче пухăна-пухăна тăнă çарĕсем çине, хирти склачĕсем çине, артиллери батарейисем çине тата снабжени центрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Англи истребителĕсен пысăк соединенийĕсем Венгрири аэродромсене тапăннă. Тăшманăн çĕр çинче ларнă нумай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем тăшманăн Австрири, Венгрири, Италири, Югославири тĕрлĕ объекчĕсене тата Адриатика тинĕсĕ çинчи суднисене пыра-пыра тапăннă.

НИМĔÇСЕМ АФИНЫ ХУЛИНЧЕН ТУХСА КАЙНА

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: лайăх пĕлекен çынсем каланă тăрăх, нимĕçсем Афины хулинчен тухса кайнă.

НИМĔÇ КОМЕНДАНЧĔ БЕЛГРАДРАН ТУХСА ТАРНА

ЖЕНЕВА, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен официальнă пĕлтернĕ тăрăх, Белград хулин нимĕç коменданчĕ Лист генерал хăйĕн штабĕпе пĕрле Белградран тухса тарнă.

БУДАПЕШТ ХУЛИНЧЕ ÇЫНСЕМ ХĂРАСА ÿКНЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио, турoксен корреспонденчĕ Будапештран пĕлтерни çине кăтартса, çапла пĕлтерет: Будапешт хулинче çынсем пĕтĕмпех хăраса ÿкнĕ. Будапешт хулине Венгрин хĕвелтухăç енчи районĕсенчен куçса кайнă çынсем питĕ нумай пыраççĕ, тет.

КĔСКЕН

* Голландин нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче юлашки вăхăтра гитлеровецсен террорĕ чылай вăйлăланнă. Амстердам хулине нимĕç полицейскийĕсем 8.000 çынна яхăн пынă. Пур çĕрте те продуктсене тыта-тыта илеççĕ. Халăха выçлăх хăратса тăрать. Темиçе тĕлте халăха укрепленисем тунă çĕрте ĕçлеме ирĕксĕр мобилизацилеççĕ. Нимĕçсем хаяррăн тыткаласса пулин те, Голланди çыннисем çав ĕçрен пăрăнаççĕ.

* Португали правительстви çапла каланă: вăрçă преступникĕсене Португали çĕрĕнче вырăн партарас çук, тенĕ.

* Францире, историллĕ памятниксене çĕмĕрсе, 10.000 миллиард франклăх сиен тунă. Руанри собор пуринчен те ытларах сиен курнă. Архитектурăн паллă памятникĕсем — Кан хулинчи кафедральнăй собор тата Реймри собор — ăнсăртран çеç çăлăнса юлнă. Руан хулин 5 пайĕнчен 1 пайĕ ишĕлсе пĕтнĕ. Гавр хулинче 15.000 çурт ишĕлнĕ.

* Америка самолечĕсем октябрĕн 11-мĕшĕнче авианосецсем çинчен вĕçсе хăпарса Формоза утравне тапăннă. Японин 221 самолетне пĕтерсе тăкнă, 16 суднине шыва путарнă, 19 суднине сиенленĕ. Америка авиацийĕн 22 самолет пĕтнĕ.

* Ноябрĕн 4-мĕшĕпе 5-мĕшĕнче Лондонра Совет Союзĕпе туслăн пурăнса килĕштерсе ĕçлес ыйтупа наци конгресĕ пухăнать. Тред-юнионсем нумайĕшĕ çав конгреса яма хăйсен делегачĕсене суйласа хунă ĕнтĕ.

* Италин союзниксем ирĕке кăларнă районĕсенчен çĕнĕрен 6 районa Итали администрацийĕн аллине панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех

«МАШЕНЬКА»

ятлă саслă, илемлĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса иркине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Часах

Совет Союз Геройĕн Зоя Космодемьянскаян пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ÿкернĕ

«З О Я»

ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартма тытăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00742 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59Х42 п. д. Тираж 16.000 экз.